Сулмаклă утăмсем

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ – Чăваш Республикинчи чи ватă учрежденисенчен пĕри. Ăна 1930 çулхи августăн 18-мĕшĕнче Шупашкар хулинче Чăваш комплекслă ăслăлăх тĕпчев институчĕ тесе йĕркелесе янă. Нумай профильлĕ çĕнĕ институт пуçламăш тапхăрта çак пайсенчен тăнă: промышленноçпа экономика, ял хуçалăх, культурăпа пурнăç йĕрки. Ятарлă положени тăрăх унта ăслăлăх библиотеки ĕçленĕ. 1931 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕнче Чăваш АССР Халăх комиссариачĕн канашĕ Чăваш комплекслă ăслăлăх тĕпчев институчĕ çинчен положени çирĕплетнĕ, унта институт умĕнчи тĕллевсене, унăн структурине, персоналне, ĕçе йĕркелекен механизмне тата бюджетне палăртнă.

Институтăн пĕрремĕш директорĕ Чăваш АССР çут ĕç халăх комиссарĕ М.С. Сергеев пулнă. 1930 çулсенче ăслăлăх учрежденине В.А. Долгов, С.С. Кутяшов, А.С. Сергеева, Н.В. Васильев (Шупуççынни), Н.А. Резюков, И.Я. Яковлев (Саламбек) ертсе пынă, 1942–1963 çулсенче – П.Г. Григорьев, С.И. Ухватов, В.В. Чебухов, Т.Г. Гусев, И.А. Афанасьев, В.Н. Любимов, М.А. Андреев; 1963–1968 çулсенче – И.Д. Кузнецов, 1968–1988 çулсенче – В.Д. Димитриев.

1933 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 15-мĕшĕччен институт республикăри 21 яла пĕтĕмĕшле тĕпченĕ. 1935 çулхи июлĕн 15–18-мĕшĕсенче учреждени чăваш чĕлхе пĕлĕвĕн ыйтăвĕсемпе пĕрремĕш хут конференци ирттернĕ, унта чăваш чĕлхин орфографийĕпе терминологине сӳтсе явнă. 1937 çулта тепĕр пысăк мероприяти – Чăваш тата Тутар АССРĕсенче лингвистика экспедицийĕ – иртнĕ, 23 районти 120 ял тĕпчеве хутшăннă.

Институт кун-çулĕ пултаруллă ăсчахсем тунă пысăк çитĕнӳсемпе палăрса тăрать, кунта И.Д. Кузнецов, П.Г. Григорьев, Т.М. Матвеев, Е.З. Захаров, К.В. Элле,

ŋqdqɏeɎ bɆ dɘqɆbɎɜə d ɕɔɑbɔɏ Ɉqdqɏqɏè

В.Г. Егоров, И.С. Тукташ, М.Я. Сироткин, Н.Р. Романов, Т.Г. Гусев, Д.Е. Сапожников, Н.А. Ургалкина, А.А. Трофимов, В.А. Нестеров, В.Д. Димитриев, В.Ф. Каховский, П.С. Краснов, В.Н. Викторов, Т.И. Петрова, Л.Г. Федорова, Э.Я. Дмитриева т.ыт.те нумай вăй хунă.

1989 çулхи март уйăхĕнчен пуçласа 2010 çулхи апрельччен Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтне экономика ăслăлăхĕсен докторĕ С.Р. Малютин, искусствоведени докторĕ А.А. Трофимов тата истори ăслăлăхĕсен докторĕ В.С. Григорьев ертсе пынă. 2010 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнчен институт директорĕ – филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Ю.Н. Исаев.

2010 çулсенче институт администрацийĕ ăслăлăх тĕпчев ĕç-хĕлне лайăхлатас, ытти наука центрĕсемпе туслă çыхăнусем çирĕплетес тĕлĕшпе çĕнĕ утăмсем тунă. XX ĕмĕр вĕçĕнчех институт ĕçтешĕсем пĕтĕмлетӳллĕ наука сессийĕсен ĕçне çĕнĕлле йĕркелес тесе сĕнӳсем панă. Сăмах докладсемпе пĕлтерӳсене тивĕçлĕ шайра сӳтсе явасси пирки пынă. 2011 çулта мероприяти пахалăхне тата унăн тарăн шухăшлăхне лайăхлатма нумай çĕнĕлĕх кĕртнĕ: пĕрремĕшĕнчен, наука подразделенийĕсем сĕннĕ докладсенчен çĕнĕлĕх тата çивĕч ыйту пуррисене çеç сӳтсе явма йышăнасси; иккĕмĕшĕнчен, пурнăçланă ĕçе анлăн та пур енлĕ тишкерме докладсемпе пĕлтерӳсен тексчĕсене малтан уйрăм брошюрăсем туса пичетлемелле, çĕр-шыври тата республикăри ăслăлăх учрежденийĕсене, аслă шкулсене ярса памалла; виççĕмĕшĕнчен, докладсене оппонентсен хак памалла. 2011–2014 çулсенче институтăн ăслăлăх доклачĕсене çак форматпа пăхса тухнă.

Пĕлетпĕр ĕнтĕ, XX ĕмĕрте чăваш тĕпчевçисем те, тутар тĕпчевçисем те Атăлçи халăхĕсен этнос историйĕпе культурин ыйтăвĕсене пăхса тухас, уçăмлатас тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттернĕ. Вĕсен ĕç пĕтĕмлетĕвĕ чылай енчен пĕр евĕрлĕ. Çав вăхăтрах аваллăха чĕртсе тăратса, ăна çĕнĕлле хак парса чăваш тата тутар ученăйĕсем Атăлçи Пăлхар культурăпа истори еткерлĕхĕ пирки тĕрлĕ

ŋqdqɏeɎ bɆ dɘqɆbɎɜə d ɕɔɑbɔɏ Ɉqdqɏqɏè

пĕтĕмлетӳсем патне пырса тухрĕç. Шел пулин те, çак ыйтупа пĕтĕмлетӳсем тунă чухне чăваш тата тутар истори шкулĕсен хутшăнăвĕсем самаях сивĕннĕччĕ. 2013 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче Шупашкарта ку тĕлĕшпе пĕлтерĕшлĕ мероприяти – «Волжская Болгария (Булгария): этнокультурная ситуация и общественное развитие» темăпа семинар иртрĕ. Ăна Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕпе Тутар Республикин ăслăлăхсен академийĕн Ш. Марджани ячĕллĕ Истори институчĕ йĕркелерĕ. Юлашки вунă çуллăхра пĕрремĕш хут чăваш тата тутар ăсчахĕсем Атăлçи Пăлхар патшалăхĕн тата Атăл тăрăхĕнчи пăлхарсен историйĕпе культури тĕлĕшпе тухса тăнă тавлашуллă ыйтусемпе «çавра сĕтел» ирттерсе пĕр-пĕрин шухăшĕсемпе паллашрĕç, сӳтсе яврĕç. Форума хутшăнакансем çак дискуссисене усăллă тесе палăртса вĕсене малалла тăсма йышăнчĕç. Тутар истори шкулĕпе йĕркеленнĕ тачă çыхăну пирĕн кӳршĕсен пысăк пĕлтерĕшлĕ тĕпчев проекчĕсенче чăваш ученăйĕсене те ĕçлеме çул уçрĕ. Тутар ăсчахĕсем те ЧПГĂИ тĕпчев проекчĕсене хутшăнчĕç. 2014 çулта ЧПГĂИ археологĕсем тутар специалисчĕсемпе пĕрле Тутарстанра (юлашки вунă çуллăхра пĕрремĕш хут) археологи экспедицийĕ йĕркелерĕç.

2010–2013 çулсенче институт коллективĕ истори, этнологи, археологи, филологи, экономика, искусство, социологи тата ытти отрасльсемпе пурĕ 85 кĕнеке кăларчĕ, 97 ăслăлăх конференцийĕ, сессийĕ, анлă ларусем, «çавра сĕтелсем» ирттерчĕ.

2014 çулта 10 уйăхра 13 наука ĕçĕ кун çути курчĕ. 2013 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнче институт структуринче улшăнусем пулчĕç. Ăслăлăх подразделенийĕсен ĕç-хĕлне çĕнетсе лайăхлатас тĕллевпе хальччен пулнă пайсене виçĕ ене – истори, филологи тата искусствоведени – пĕрлештерес терĕç.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн вырăнĕ Раççей Федерацийĕн ăслăлăх анлăхĕнче уйрăм пĕлтерĕшлĕ: вăл çĕр-шывра чăваш чĕлхин, литературипе

ŋqdqɏəɎ bɆ dəqɆbɎɜə d ɞɔɑbɔɏ Ɉqddɏqɏè

ŋqdqɐeɎ bɆ dədɆbɎɜə d ɕɔɑbɔɐ ɈqddɎqɐè

фольклорĕн, чăваш халăхĕн тата Чăваш Республикин истори, археологи, социологи, этнологипе искусство ăслăлăхĕсен теори тата ăслăлăхпа ĕçлевлĕх ыйтăвĕсене пĕтĕмĕшле тĕпчекен учреждени пулса тăрать, нумай профильлĕ ăслăлăх центрĕн ĕçĕсене пурнăçлать. 2006 çултанпа «Чувашский гуманитарный вестник» ăслăлăх журналĕ тухса тăрать. Унта тăван çĕр-шыв тата ют çĕр-шыв (Япони, Венгри, Германи, США) тĕпчевçисем хăйсен статйисемпе пĕлтерĕвĕсене, рецензисене пичетлеççĕ. 2012 çултанпа учреждени «Ăс-хакăл = Знание» ятпа хаçат кăларать.

Институт Чăваш Республикинчи пултарулăх пĕрлĕхĕсемпе, аслă шкулсемпе тачă çыхăнса ĕçлет, Мускав, Санкт-Петербург, Самара, Чулхула, Хусан, Саранск, Ĕпхӳ, Йошкар-Ола, Оренбург, Новосибирск, Ижевск, Раççей Федерацийĕн ытти хулисенчи тĕпчев тата ăслăлăх учрежденийĕсемпе хутшăнусене анлăлатать. Институт çавăн пекех Венгри, Болгари, Германи, Швеци, Франци, Турци, Китай, Япони, Казахстан, Финлянди, США тата ытти çĕр-шывсенчи ăсчах-гуманитарисемпе çыхăну йĕркелет. Институт ĕçтешĕсем – Н.И. Егоров, А.В. Кузнецов, Э.Е. Лебедев, Ю.Н. Исаев, М.Г. Кондратьев, И.И. Бойко т.ыт.те – аякри тата çывăхри ют çĕр-шывсенче иртекен ăслăлăх форумĕсене час-часах хутшăнаççĕ.

2014 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне институтра пурĕ, хушма ĕçпе ĕçлекенсемпе пĕрле, 76 çын пулнă, вĕсенчен 47 – ăслăлăх ĕçченĕсем: ăслăлăх докторĕсем – 10 çын, кандидатсем – 28. Гуманитари анлăхĕнче вăй хуракансем хушшинче паянхи кун виçĕ ăру çыннисем. Чăвашлăха тĕпчес тĕлĕшпе уйрăмах пысăк ĕçсем тунă ăсчахсем – А.А. Трофимов, М.Г. Кондратьев, А.И. Мордвинова, Г.Б. Матвеев, И.И. Бойко, Ю.В. Викторов, Н.И. Егоров, В.П. Иванов, И.Е. Ильин, В.Г. Родионов, М.И. Скворцов, В.И. Сергеев т.ыт.те.

ЧПГĂИн анлă инфраструктура. Унăн ăслăлăх библиотеки пĕлӳлĕх отраслĕсен литературипе пуян. 2014 çул пуçламăшĕ тĕлне унăн фондĕнче антропологи, ӳнер

ŋqdqɐeɎ bɆ dədɆbɎɜə d ɕɔɑbɔɐ ɈqddɎqɐè

ŋqdqɐəɤ bɆ dədɆbɤɜə d ɕɔɑbɔɐ ɟqdqɤqɐè

пĕлĕвĕ, истори, лингвистика, музыковедени, политологи, социологи, этнологи тата ытти ăслăлăх дисциплинисемпе пурĕ 14 355 кĕнеке, брошюра тата журналсем. Сайра тĕл пулакан кĕнекесен пайĕнчи революцичченхи кăларăмсем уйрăмах хаклă шутланаççĕ. Библиотекăра каталогсемпе картотека пур, вулакансем унпа тухăçлă усă кураççĕ. 2009 çултанпа библиотека ĕçченĕсем электронлă каталог йĕркелеме пуçланă. Республикăн ытти ăслăлăх учреждениййĕсенче ĕçлекенсем тата аслă шкулсенче пĕлӳ пухакансем пирĕн библиотекăн Тĕп словарь картотекин 2 миллион единиципе паллашма пултараççĕ. Вулав залĕнче – 50 вырăн.

ЧПГĂИн пĕлтерĕшлĕ структури – ăслăлăх архивĕ. Унăн фондĕнче чăваш этносĕн, çĕр-шыври ытти халăхсен историйĕпе культури çинчен калакан 15 пин ытла единица. Ăслăлăх архивĕн хыпарлав пĕлтерĕшĕ чăннипех те пысăк капашлă. Унта ăсчахсемпе писательсен, ăслăлăхпа культура ĕçченĕсен харпăр архивĕсем, пĕтĕмĕшле ăслăлăх экспедициййĕсен тата археологи разведкисен материалĕсем, сăн ӳкерчĕксемпе карттăсем, кил-тĕрĕшри искусствăн предмечĕсем, картинăсем, композиторсен нота хайлавĕсем, фонограф карас йĕке çине çырса хунă чăваш юрри-кĕввисем, «Хыпар» хаçатăн малтанхи номерĕсем, сайра тĕл пулакан кĕнекесем, Чăваш Республикинче çуралса ӳснĕ паллă çынсен харпăр япалисем, статистика пуххисем т.ыт.те. Унта упранакан хăш-пĕр ал çыру пуххисем, сăмахран, чăваш историкĕн тата этнографĕн Н.В. Никольскин ал çырăвĕсем, пĕртен-пĕр хаклă материал шутланаççĕ.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ – Чăваш Республикин хăвăрт аталанса пыракан ăслăлăх учреждениййĕсенчен пĕри. Унти ăслăлăх подразделениййĕсем паянхи кун çакăн пек темăсемпе çине тăрса ĕçлеççĕ: *истори енĕпе* – Чăваш Атăлçи тăрăхĕнчи чул тата малтанхи тимĕр ĕмĕрĕсенчи палăксене уçса тĕпчесси; археологи палăкĕсене тĕпчесси; Чăваш Атăлçи тăрăхĕнчи малтанхи чул ĕмĕрĕн тата Вăтам ĕмĕрсенчи палăкĕсем; чăвашсен

ŋqdqɐəɤ bɆ dədɆbɤɜə d ɕɔɑbɔɐ ɟqdqɤqɐè

этнос историйĕ; чăваш этносĕн мифологийĕ; XVIII ĕмĕрти Чăваш Енĕн вырăнти хăй тытăмлăх управленийĕн тытăмĕ; XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчи – XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи Атăлçи халăхĕсен этнокультура аталанăвĕ; паянхи Чăваш Енри халăхсемпе вĕсен культури; Чăваш Республикинчи наци-патшалăх йĕркелĕвĕ; Чăваш Енĕн XX–XXI ĕмĕрсенчи аграри тытăмĕ; этноссемпе конфессисен хутшăнăвĕсен социологийĕ; *искусствоведени енĕпе* – чăваш халăх юрри-кĕвви тата унăн этнос юрри-кĕввин çыхăнăвĕсем; чăвашсен профессиллĕ станоклă ӳнерĕн аталанăвĕ; чăваш ӳнерĕн хайлавĕсенчи нарспиана; Шупашкар хулин архитектури; XX–XXI ĕмĕрсенчи Чăваш Енĕн ӳнер искусстви; XX–XXI ĕмĕрсен чиккинчи музыка культуринчи композиторсен тата юрăçсен ăсталăхĕ; чăваш искусствинчи стиль енĕсем тата ӳнер сăнарĕсем; *филологи енĕпе* – чăваш чĕлхи лексикин историлле аталанăвĕ, чăваш чĕлхин тытăмĕ, чăваш тата турккă чĕлхисен глагол форминчен пулнă тытăмĕ; чăваш чĕлхин лексикипе лексикографийĕ; Н.И. Ашмарин тата чăваш ăслăлăхĕпе культура анлăхĕ; когнитивлă лингвистика; чăваш халăх пултарулăхĕ (чăваш халăх сăмахлăхĕн пуххине хатĕрлесе кăларасси); XVIII–XXI ĕмĕрсенчи чăваш литература историйĕ; паянхи чăваш прозипе литератури.

Л.П. Петров,
филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ.

ŋqdqɐeɎ bɆ dəqɆbɎɜə d ɕɔɑbɔɐ Ɉqdqɏqɐè

ТУПМАЛЛИ

Сулмаклă утăмсем *3*
Ăслăлăх çӳпçи пуян. *Ю.Н. Исаев* *9*
Институт пусмисем – гранитран. *Г.А. Николаев* *23*
Ĕмĕрхи шăн пăра катакан чĕлхеçĕ. *Л.П. Петров (Атлай)* *34*
Шăпа картни. *Ю.М. Артемьев* *46*
Кăвак хуппи уçăлсан... *Д.В. Басманцев* *53*
Улăп тăприсен чăнлăхĕ. *Н.С. Березина* *60*
Чăваш ĕни-лашине шыраса тупни. *А.Ю. Березин* *71*
Историн чăн хаклавĕ. *И.И. Бойко* *76*
Чăваш халăхĕн хăвачĕ. *Ю.В. Викторов* *82*
Слак çумĕпе – Шупашкара. *Ю.М. Виноградов* *89*
Уйрăм çын витĕр истори курăнать. *Ю.В. Гусаров* *94*
Çĕнĕ вăхăт чĕлхи йыхăрсан... *Г.А. Дегтярёв* *100*
Тĕп хуламăр историйĕ çинчен. *В.Д. Димитриев* *108*
Чĕлхе пуянлăхĕ – вăл хăйне евĕр пулнинче. *А.П. Долгова* *114*
Миф-юрату. *В.А. Ендеров* *124*
Хушăлкапа Силпи хутлăхĕнче. *В.П. Иванов* *129*
Ял çыннине мĕншĕн ĕне кирлĕ?.. *И.Е. Ильин*................. *137*
Чăнлăхăн тӳнтер пичĕ. *Е.В. Касимов* *146*
Илле Тăхти илĕртрĕ. *И.Ю. Кириллова* *153*
Чăнлăх тĕп вырăнта. *В.Н. Клементьев* *159*
Пире тыткăнлакан ытарайми ӳнер тĕнчи. *М.Г. Кондратьев* *164*
Кĕрекемĕр сарлака, нисепĕ пуян. *А.В. Кузнецов* *173*
Чĕлхе вăрттăнлăхĕсем. *Э.Е. Лебедев* *178*
Хамăр вăйăмăра шаннă. *А.П. Леонтьев* *184*
Çимĕкрен пуçласа Питравччен... *Г.Б. Матвеев* *196*

ŋqdqɐeɎ bɆ dəqɆbɎɜə d ɕɔɑbɔɐ Ɉqdqɏqɐè

ŋqdqɐeɎ bɆ dəqɆbɎɜə d ɕɔɑbɔɐ ɟqddɎqɐè

Авалхи паласен вăрттăнлăхĕ... *Е.П. Михайлов* *202*
Тимĕр ĕмĕрĕн вăрттăнлăхĕсем. *Н.С. Мясников* *209*
Ĕмĕртен вăрăмрах ĕç стажĕ. *В.П. Никитин (Станьял)* ... *214*
Чăваш тĕнчин юписем. *А.А. Осипов* *221*
Чăваш пулса пурăнни. *В.Г. Родионов* *228*
Юррăмсем – çунатăмсем... *Т.И. Семенова* *235*
Чĕлхе илемĕшĕн. *В.И. Сергеев* *241*
Сĕтел хушшинче. *Е.В. Сергеева* *247*
Тăван сăмах тыткăнĕнче. *М.И. Скворцов* *254*
Пуçламан каçалăк. *Н.Б. Смирнова (Малясова)* *262*
Кĕнекене алла илсен... *А.С. Сулейманова* *266*
Авалхи тĕнче курăм тата паянхи
менталитет. *О.Н. Терентьева* *275*
Зороастризмран тухнă çул-йĕр. *А.А. Трофимов* *282*
Халăх культурине витĕм кўресси. *Г.Ф. Трофимов*
(Юмарт) *294*
Этем чунĕнчи хусканусем. *Г.И. Фёдоров* *300*
Чăваш тĕнчи тăрăх вĕçни... *Е.В. Федотова* *308*
Истори чаршавĕ хыçĕнче. *В.Г. Харитонова* *317*
Ăс-хакăллă чун хăюлăхĕ. *А.П. Хусанкай* *321*
Чĕлхе мĕншĕн улшăнать? *Э. Алос-и-Фонт* *328*
Фонологи тата поэзи вăрттăнлăхĕсем. *П.Я. Яковлев*
(Яккусен) *334*

ŋqdqɐeɎ bɆ dəqɆbɎɜə d ɕɔɑbɔɐ ɟqddɎqɐè

ŋqdqɏeɎ bɆ dədɆbɎɜə d ɞɔɑbɔɏ Ɉqdqɗɏqɏè

Чувашский государственный институт гуманитарных наук

Научно-популярное издание

ЗНАНИЕ – СИЛА

Интервью

На чувашском языке

Составители
САЧКОВА Людмила Николаевна,
ПЕТРОВ (АТЛАЙ) Леонид Порфирьевич

Использованы фотографии из архива ЧГИГН
и личных архивов сотрудников института

Редактор *Т.Н. Таймасова*
Корректор *Г.И. Алимасова*
Компьютерный набор *Л.Н. Сачковой*
Верстка *Л.Н. Сапоговой*

ŋqdqɏeɎ bɆ dədɆbɎɜə d ɞɔɑbɔɏ Ɉqdqɗɏqɏè